28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 24 ШАМАТКУН 228 (6979) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

Партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес ӗҫе куллен ертсе пымалла

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче коммунистсен партийӗн вӑйхӑвачӗ пӗтӗм тӗнче умӗнче ҫав тери уҫҫӑн палӑрчӗ. Большевиксен партийӗн вӑрҫӑччен пӗтӗм ӗҫе историллӗ задачӑна—Европа халӑхӗсене фашистла империалистсен пусмӑрӗнчен хӑтарас задачана чыслӑн пурнӑҫа кӗртме хатӗр пулнине кӑтартса пачӗ. Пирӗн парти тӗрӗс политика тытса пынине пула, пӗтӗм совет халӑхӗ ҫирӗп пӗтӗҫсе тӑчӗ. Совет халӑхӗ морально политика тӗлӗшӗнчен питӗ ҫирӗп пулчӗ, кашни совет гражданинӗн чӗринче ҫӗнтерӳ шанчӑкӗ вӗресе тӑчӗ.

Пирӗн партипе совет халӑхӗ хушшинче ҫирӗп ҫыхану пулман пулсан, совет халӑхӗ ҫак аслӑ вӑрҫӑра ҫӗнтерме пултарайман пулӗччӗ. Партипе халӑх хушшинчи ҫав тачӑ ҫыхӑну пирӗн парти ӳссе пынин тӗслӗхӗсенчен те лайӑх курӑнса тӑрать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кӑна пирӗн парти ретне темиҫе миллион ҫын ҫӗнӗрен хутшӑнчӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче парти речӗ ӳссе пынине Чӑваш республикинчи парти организацийӗ ӳссе пынинчен те уҫҫӑн курма пулать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи юлашки 3 ҫул хушшинче Чӑваш республикинче парти ретне 13.000 ҫын ытла кӗнӗ. Уйрӑм районсенчи парторганизацисен йышӗ, партие ҫӗнӗрен илнӗ членсемпе кандидатсен шучӗпе, икӗ хут е ытларах та ӳснӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсен шучӗпе парти речӗ ӳссе пынипе ялсенчи пуҫламӑш парторганизацисен хисепӗ хутшӑнчӗ. Сӑмахран, Красноармейски районра 1941 ҫулта ялсенче 4 парторганизаци шутланнӑ пулсан, халӗ унта 12 парторганизаци пур. Советски районра ялсенче 7 парторганизаци пулнӑ пулсан, халӗ—16, Ҫӗрпӳ районӗнче 6 пулнӑ пулсан, халӗ—15 парторганизаци пур.

Анчах та уйрӑм районсенче партие илес тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлемеҫҫӗ, партире тӑман активпа ӗҫлессине ҫителӗклӗ организацилемен. Ҫавна пула уйрӑм районсенчи парторганизацисенче, сӑмахран, Сӗнтӗрвӑрри, Шӑмаршӑ, Кувакино районӗсенче колхозниксене парти ретне илесси ҫителӗксӗр пулса пынӑ.

Парти ретне ӳстерес ыйту ҫине хисеп енчен кӑна пӑхни тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ. Партие илес ыйтупа парти организацийӗсен партин XVIII-мӗш съездӗнче Сталин юлташ каланине яланах асра тытас пулать. Сталин юлташ ҫапла каланӑ: „Парти членӗсен ӑнланулӑхӗн шайне хӑпартса пырса, парти ретне коммунизм ӗҫне паранса тӑнипе тӗрӗсленнӗ юлташсене уйрӑмӑн суйласа илсе парти ретне тӑтӑшах лайӑхлатса пымалла“. Большевиксен партийӗн ретне чи лайӑх ҫынсене суйласа илес тӗлӗшпе парти организацийӗсене пысӑк ответлӑх тивет.

Партие илесси пуҫламӑш организацисем урлӑ пулса пырать. Парти ретне кама, мӗнле ҫынна илнине пуҫламӑш организаци пур енчен те тӗплӗн пӗлсе тӑмалла. Пуҫламӑш парторганизацисен парти ретне илекен ҫын ҫинчен анкетӑсем е отзывсем тӑрӑх кӑна мар, ҫынна ӗҫре сӑнанипе пӗлсе тӑмалла. ВКП(б) ретне илекен ҫынна мӗн чухлӗ вӑхӑт хушши сӑнаса тӑмаллине парти кӑтартса памасть пулин те, парторганизаци партие кӗрекен ҫын чӑнахах та коммунист ятне илме тивӗҫлӗ пулнине хӑй ӗненсе тӑрсан, вӑл ҫынна лайӑх пӗлсе тӑрсан ҫеҫ илме пултарать. Ку ӗнтӗ партие илес ӗҫре васкама кирлӗ марри ҫинчен пӗлтерет. Парторганизацин хӑй тавра партире тӑман ҫынсен активне организацилемелле, партире тӑман юлташсене общество ӗҫне хутшӑнтармалла, ҫав актив шучӗпе вара хӑйӗн ретне ӳстерсе пымалла.

Партире тӑман актив ҫинчен Сталин юлташ: актив вӑл партипе рабочи класӑн миллионшар массисене ҫыхӑнтарса тӑракан меслет пулса тӑрать, тенӗ. „Парти ҫав актив шучӗпе ӳсет. Ҫав актив урлӑ массӑсем партие шанса тӑрасси ӳссе пырать... Партире тӑман активӗ, ҫапла вара, партие массӑпа ҫыхӑнтарса тӑрать ҫеҫ мар, парти ҫӗнӗрен вӑйсем илсе тӑракан пит пуян ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрать. Ҫавӑн пек актив пулман пулсан, пирӗн парти аталанса пыма та пултарайман пулӗччӗ. Парти тавра партире тӑман сарлака актив ӳссе ҫирӗпленет пулсан, парти хӑй те ӳссе ҫирӗпленсе пырать. Ҫавӑн пек актив ҫук пулсан, парти хавшаса, вӑйсӑрланса пырать“.

Партин пуҫламӑш организацийӗ партие илес ыйтӑва татса парас тӗлӗшпе пӗртен-пер организаци пулса тӑмасть. Партин горкомӗсемпе райкомӗсен пуҫламӑш организацийӗсем ҫӗнӗрен членсем илес тӗлӗшпе мӗнле ӗҫленине яланах сӑнаса тӑмалла. Вӗсем вара партие ҫӗнӗрен илекен кашни ҫыншӑн ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Парти райкомӗсем, паллах, партие кӗрекен уйрӑм ҫынсем пирки илессипе илес марри ҫинчен решени йышӑннипе ҫеҫ ҫырлахма пултараймаҫҫӗ. ВКП(б) Центральный Комитечӗ хушнӑ тӑрӑх, горкомсемпе райком бюровӗсен, кашни черетлӗ пленумрах, пленумсем хушшинче мӗн чухлӗ ҫӗнӗрен членсемпе кандидатсем ҫирӗплетни ҫинчен отчет тӑратмалла.

Ҫапла вара партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес ыйтӑва парторганизацисенчи политикӑллӑ ӗҫ епле пынипе ҫыхӑнтарас пулать. Партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес ӗҫ вӑл парти организацисен ӗҫӗнчен уйрӑлса тӑма пултараймасть. Партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес ыйтӑва парторганизацин пӗтӗм ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтармалла. Партире тӑман ҫынсемпе парторганизаци мӗнле ӗҫлет, партие кӗрекен ҫынсен умне вӑл мӗнле требованисем лартать,—ҫаксене пурне те шута илес пулать. Пӗр иккеленмесӗрех ҫапла калама пулать: парти ретне ҫӗнӗрен ҫынсем кӗмен ҫӗрте парти ретне хутшӑнтарассишӗн тӑрӑшманни паллах. ВКП(б) уставӗнче каланӑ тӑрӑх, партие ҫӗнӗ ҫынсем суйласа илесси, вӗсене политикӑллӑ воспитани парасси парти организацийӗсен тӗп задачисенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫак задачӑна мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынинчен парти организацийӗсен шалти ӗҫӗ епле пынине те хаклама пулать.

Партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес ӗҫе кулленех ертсе пымалла. Парти организацийӗ хӑй теллӗнех ӳссе пырассине шанса ларма юрамасть. Партин пуҫламӑш организацийӗсенчен кашниех хӑйӗн кулленхи ӗҫӗнче партире тӑман активӑ ӳстерсе ӑна воспитани парассишӗн тӑрӑшмалла. Производстври рабочисене, трактористсене, колхозниксене, интеллигенцин чи лайӑх пайне общество ӗҫне хутшӑнтарса пымалла, уйрӑм поручениесем парса вӗсене ӗҫре тӗрӗслемелле. ВКП(б) уставӗ парти ретне уйрӑмӑн илме хушни вӑл парторганизаци хӑйӗн ретне парти членӗн аслӑ ятне илме тивӗҫ ҫынсене суйласа илнинче, парторганизаци ҫӗнӗрен илекен ҫынна шанса тӑнинче пулать те ӗнтӗ.

Халӗ пирӗн ҫӗршыв СССР Верховный Совет суйлавне ирттерме хатӗрленет. СССР Верховный Советне депутатсем суйласси пирӗн Тӑван ҫӗршыв пурнӑҫӗнче политикӑллӑ пит пахӑ событи пулса тӑрать. Парти организацийӗсен халӑх хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса ямалла. Суйлава хатӗрленес ӗҫе стахановец-рабочисенчен, колхозниксенчен, трактористсенчен, совет интеллигенцийӗнчен ҫӗршер-пиншер активистсем хутшӑнчӗҫ. Ҫакна май пуҫламӑш парторганизацисем партире тӑман активпа таччӑнрах ҫыхӑнма пултараҫҫӗ, вӑл активран парти ретне илме ҫӗнӗ ҫынсем ӳссе ҫитӗнеҫҫӗ.

Парти ретне илесси партин чи ответлӑ задачисенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ку ӗҫе формально пӑхни сиенлӗ. Партие ҫӗнӗрен ҫынсем илес енӗпе ВКП(б) уставне пурнӑҫа тӗплӗн кӗртсе пыни парти ретне таса тытас ӗҫре чи паллӑ услови пулса тӑрать. Ҫакӑ вӑл ленинла-сталинла иксӗлми принцип пулса тӑрать, вӑл принципран пӑрӑнма никама та ирӗк паман. Партие ҫӗнӗрен кӗрекен ҫынсене уйрӑммӑн пӑхса илсен ҫеҫ парти ретне пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫынсене, ВКП(б) членӗн аслӑ ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ ҫынсене суйласа илме май пулать.

Айӑплисем ответ тытмалла

Сӗнтӗр районӗнчи „Коммунар“ колхоз тырпул пухса кӗртес тӗлӗшпе чӑтма ҫук начар ӗҫлерӗ. Тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра нумай колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫрен вӑранса, майӑрта ҫӳрерӗҫ. Колхоз председателӗ А. Саптеев ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе нимӗн те тумарӗ.

5 гектар пӑрҫа, 17 гектар ҫулса пӑрахнӑ тӗрлӗ тырӑсем юр айне юлчӗҫ. 3 гектар кантӑра халӗ те татса пӗтермен.

Колхоз государствӑна тырӑ парса татман. Колхоз тыррине ҫапла таккаласа пӗтернӗшӗн колхоз председателне А. Саптеева кӑна мар, бригадирсене те ответ тыттармалла.

Я. ЯКОВЛЕВ

РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Указӗ

РСФСР-тан Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Горький округӗнчи суйлав комиссине ҫирӗплетесси ҫинчен

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 47-мӗш, 48-мӗш тата 49-мӗш статьисем тӑрӑх, РСФСР-тан Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Горький округӗнчи суйлав комиссийӗн составне ҫак обществӑллӑ организацисемпе ӗҫҫыннисен обществисен представителӗсене кӗртсе ҫирӗплетес:

Суйлав комиссийӗн председателӗ—Анатолий Иванович **Казаков**—государство учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен профессиллӗ союзӗн Горький организацийӗнчен,

Суйлав комиссийӗн председатель заместителӗ—Григорий Алексеевич **Мартынов**—Чӑваш республикинчи коммунистсен организацийӗнчен,

Суйлав комиссийӗн секретарӗ—Софья Израилевна **Скундина**—Горькири С. М. Киров ячӗпе тӑракан медицина институчӗн студенчӗсенчен тата преподавателӗсемпе профессорӗсенчен.

Суйлав комиссийӗн членӗсем:

Николай Андреевич **Андреев** — Чӑваш АССР-ӗнчи Советски районри «Сеятель» колхоз колхозникӗсенчен,

Василий Яковлевич **Головкин**—СССР-ти Осоавиахимӑн Горький облаҫӗнчи Советӗнчен,

Елизар Васильевич **Куратов**—Горькири Ленин орденлӗ, Хӗрлӗ Ялав орденлӗ тата 1-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденлӗ Молотов ячӗпе тӑракан автомобиль заводӗнчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Владимир Алексеевич **Курседов**—Горькири коммунистсен организацийӗнчен,

Тамара Леонтьевна **Мурышкина**—Шупашкарти заводри рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Иван Иванович **Набатов**—Горький хулинчи Ленин орденлӗ, икӗ хут Хӗрлӗ Ялав орденлӗ тата 1-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан заводри рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Леонтий Михайлович **Новожилов**—Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн Горький организацийӗнчен,

Анна Степановна **Ягодкина** — Чӑваш республикинчи машинно-тракторнӑй станцисемпе ҫӗрҫ органӗсенчи рабочисемпе служащисен профессиллӗ союзӗн организацийӗнчен.

РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.
РСФСР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.

Мускав, 1945 ҫулхи ноябрӗн 22-мӗшӗ.

Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратаҫҫӗ

Союз Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратас ӗҫ малалла пырать.

ШУПАШКАР округӗнчи суйлав комиссийӗн составне кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе йышлӑ пухусем пулса иртнӗ. Красноармейски районри «Смычка» ялхуҫалӑх артелӗн колхозниксен пухӑвӗ, пӗр саслӑ пулса, колхоз членне Григорий Михайлович Михайлов юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. Михайлов юлташ — Отечественнӑй вӑрҫӑра пулнӑ ҫын. Правительство ӑна «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденпа, «Хастарлӑхшӑн» тата «Ҫапаҫури чаплӑ ӗҫсемшӗн» ятлӑ медальсемпе наградӑланӑ. Коммунистсен Чӑваш область организацийӗнчен ВКП(б) Обкомӗн секретарӗн сутуилӳпе обществӑллӑ апатлану енӗпе ӗҫлекен заместительне Мария Михайловна Романова юлташа кандидата тӑратнӑ. Совет писателӗсен пухӑвӗ суйлав комиссийӗн составне халӑх поэтне орденоносеца Семен Васильевич Эльгера кандидата тӑратма йышӑннӑ. Ишлей районӗнчи «Акара» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем суйлав комиссийӗн составне колхоз председательне Филипп Степанович Бусова кандидата тӑратнӑ. Бусов юлташа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ. «Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав» орденлӗ заводри рабочисен, служащисен тата инженерсен коллективӗ хӑйсен кандидачӗ пулма слесарь-инструментальщика Евгений Григорьевич Мищенко юлташа кандидата тӑратнӑ. Коммунистсен партийӗн Шупашкар районӗнчи организацийӗнчен ВКП(б) райкомӗн пӗрремӗш секретарьне Василий Иванович Караушев юлташа кандидата тӑратнӑ.

КАНАШ округӗнчи суйлав комиссийӗн составне кандидатсем тӑратма пухнӑ пухусем пысӑк хавхаланупа иртнӗ. Куславккари комбинатра ӗҫлекен рабочисен тата служащисемпе инженерсен пухӑвӗ, пӗр саслӑ пулса, суйлав комиссийӗн составне Василий Гаврилович Жиглаев юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. Жиглаев юлташ Куславккари комбинатра электромонтер пулса ӗҫлет. Пуҫламӑш тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Елчӗк районӗнчи организацийӗнчен Шӑмалакри ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулӑн директорне Александр Алексеевич Дмитриев юлташа кандидата тӑратнӑ. Отечественнӑй вӑрҫӑра пулса, Дмитриев юлташ «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденпа II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Хастарлӑхшӑн» ятлӑ икӗ медаль илнӗ. Ӗҫсынни депутачӗсен Канаш хули Советӗн исполкомӗ ҫумӗнчи госучреждени работникӗсен профсоюзӗн месткомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, суйлав комиссийӗн составне Канаш хула Совечӗн исполкомӗ ҫумӗнчи Гособеспечени отделӗн инспекторне Анна Григорьевна Исаева юлташа кандидата тӑратнӑ. Шӑхасан МТС-ӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗ хӑйсен кандидачӗ пулма тракторист-стахановеца Иван Семенович Долгов юлташа тӑратнӑ.

СӖМӖРЛЕ округӗнчи суйлав комиссийӗн составне те кандидатсем тӑратнӑ. Калинино районӗнчи «Первое мая» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсен пухӑвӗ суйлав комиссийӗн составне колхоз председательне Василий Иванович Иванов юлташа кандидата тӑратнӑ. Калинино районӗнчи коммунистсен организацийӗнчен Дмитрий Иванович Уткин кандидатурине тӑратнӑ. Вӑл ВКП(б) Калинино райкомӗн ҫарӗҫ пайӗн заведующийӗ пулса ӗҫлет. Муркаш районӗнчи «Искра» колхоз колхозникӗсем хӑйсен кандидачӗ пулма колхоз счетоводне Елизавета Андреевна Волкова юлташа тӑратнӑ. Пуҫламӑшпе вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Етӗрне райкомӗ Анна Дмитриевна Трофимова юлташ кандидатурине тӑратнӑ. Трофимова юлташ Етӗрнери вӑтам шкулта учительница пулса ӗҫлет. Ҫирӗм пилӗк ҫул хушши халӑха вӗрентес тӗлӗшпе хастарлӑн ӗҫленӗшӗн правительство ӑна «Хисеп палли» орденӗ парса наградӑланӑ.

УЛАТӐР округӗнчи суйлав комиссийӗн составне кандидатсем тӑратма пухнӑ пухусем активлӑн иртнӗ. Улатӑрти паровозсем юсакан заводри рабочисен тата служащисемпе инженерсен коллективӗ, пӗр саслӑ пулса, суйлав комиссийӗн составне Александр Иванович Брейкин юлташӑн кандидатурине тӑратнӑ. Брейкин юлташ профсоюзсен заводри комитечӗн председателӗ пулса ӗҫлет. ВКП(б) Улатӑр горкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Улатӑр хулинчи коммунистсен организацийӗнчен ВКП(б) горкомӗн пӗрремӗш секретарьне Леонтий Георгиевич Шерстюк юлташа кандидата тӑратнӑ. Осоавиахимӑн Улатӑр хула Советӗнчен эвакогоспиталь начальникӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместительне Петр Антонович Лесных юлташа кандидата тӑратнӑ. Вӑрман хатӗрлесе юхтарас тӗлӗшпе ӗҫлекен рабочисен профсоюзӗн Улатӑр райкомӗ суйлав комиссийӗн составне Федор Митрофанович Пшеничный юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. Пшеничный юлташ—Улатӑрти Лесхозӑн ҫӗнӗ строительство тӗлӗшпе ӗҫлекен инженерӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑра пулса, вӑл «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденпа II-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Ҫапаҫури чаплӑ ӗҫсемшӗн» медаль илнӗ.

Комсомольски районри «Трактор» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсен пухӑвӗ, пӗр саслӑ пулса, Улатӑр округӗнчи суйлав комиссин составне, колхоз председательне Татьяна Илларионовна Иванова юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратаҫҫӗ

Национальноҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тӑратас ӗҫ малалла пырать.

ШУПАШКАР ЯЛ округӗнчи суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе пухусем пулса иртрӗҫ. Шупашкар районӗнчи «Память Ленина» ялхуҫалӑх артель колхозникӗсен пухӑвӗ колхоз председательне Петр Егорович Егоров юлташа тӑратнӑ. Колхоза лайӑх ертсе пынӑшӑн правительство ӑна «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медальпе наградӑланӑ. Пуҫламӑш тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Шупашкар райкомӗ суйлав комиссин составне Мария Ивановна Иванова юлташ кандидатурине тӑратма йышӑннӑ. Вӑл Шупашкар районӗнчи сутӗҫ пайӗнче инспектор пулса ӗҫлет. Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар райсовет исполкомӗ ҫумӗнчи госучреждени работникӗсен союзӗн месткомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, райсовет исполком председателӗн гособеспечени енӗпе ӗҫлекен заместительне Михаил Николаевич Кораков юлташа кандидата тӑратнӑ. Шупашкар районӗнчи «Осоавиахим» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем колхоз председательне Андрей Яковлевич Чечнев юлташа кандидата тӑратнӑ. ВКП(б) Сӗнтӗрвӑрри райкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, районри коммунистсен ортӑрӑх, районри коммунистсен организацийӗнчен ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарьне Александра Александровна Митрофанова юлташа кандидата тӑратнӑ. Комсомолӑн Чӑваш республикинчи организацийӗнчен ВЛКСМ Шупашкар райкомӗн секретарьне Таисия Андреевна Андреева юлташа кандидата тӑратнӑ.

ЧКАЛОВСКИ округри суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе пухусем пулса иртнӗ. Коммунистсен Комсомольски районри организацийӗнчен суйлав комиссин составне ВКП(б) райкомӗн пӗрремӗш секретарьне Иван Георгиевич Георгиев юлташа кандидата тӑратнӑ. Комсомольски районри «Мурат» колхоз членӗсен пухӑвӗ тухӑҫлӑ тырпул мастерне, уйхир бригадин бригадирне Мария Порфирьевна Мазова юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн правительство ӑна «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медальпе наградӑланӑ. Комсомольски районри «Красный Октябрь» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем колхоз председательне, ВКП(б) членне Давид Александрович Акчурин юлташа тӑратнӑ.

ЕТӖРНЕРИ суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе Етӗрнери педагогика училищинчи преподавательсен, служащисен тата вӗренекенсен пухӑвӗ активлӑн иртнӗ. Училище коллективӗ, пӗр саслӑ пулса, суйлав комиссин составне педучилище преподавательне Иван Егорович Ярадайкин юлташ кандидатурине тӑратма йышӑннӑ. Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ вӑл лайӑх педагог пулнине уҫҫӑн кӑтартса парать. Кунсӑр пуҫне, Ярадайкин юлташа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ. Етӗрнери спирт заводӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗ Мария Арсеньевна Новикова юлташа тӑратнӑ. Вӑл заводри смена технологӗ пулса ӗҫлет. Етӗрне районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем хӑйсен пухӑвӗнче колхоз председательне Василий Михайлович Попов юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. ВЛКСМ Етӗрне райкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, комсомолӑн районри организацийӗнчен ВЛКСМ райкомӗн секретарьне Юрий Иванович Бурашников юлташа кандидата тӑратнӑ. Етӗрне районӗнчи «Сура» ялхуҫалӑх артелӗн колхозникӗсем Евдокия Нестеровна Кузьмина юлташа кандидата тӑратнӑ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнче СӖМӖРЛЕ округӗнчи суйлав комиссин составне кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе пухусем пулса иртрӗҫ. «Коминтерн» колхоз колхозникӗсен пухӑвӗ, пӗр саслӑ пулса, колхоз председательне Иван Петрович Кузнецов юлташа кандидата тӑратнӑ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн ӑна «Социализмла ялхуҫалӑх отличникӗ» значокӗпе тата Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ. ВКП(б) Хӗрлӗ Чутай райкомӗ суйлав комиссин составне коммунистсен районри организацийӗнчен ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарьне Александр Степанович Степанов юлташа кандидата тӑратнӑ. Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗ суйлав комиссин составне трактор бригадин бригадирне Федор Тимофеевич Афондеркин юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ.

Пуҫламӑш тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен профсоюзӗн Улатӑр райкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, суйлав комиссийӗн составне районри сутӗҫ пайӗн заведующине Нина Ефимовна Куликова юлташа кандидата тӑратнӑ. Куликова юлташа Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ парса наградӑланӑ. Улатӑр хулинчи коммунистсен организацийӗнчен суйлав комиссийӗн составне Василий Николаевич Козляковский орденоносец кандидатурине тӑратнӑ. Вӑл Улатӑрти завод начальникӗн заместителӗ пулса ӗҫлет.

Вӑрнар заводӗнчи рабочисен, служащисемпе инженерсен коллективӗ, пӗр саслӑ пулса, Вӑрнар округӗнчи суйлав комиссийӗн составне завод технорукне Павел Степанович Саперов юлташа кандидата тӑратма йышӑннӑ. Саперов юлташ, Отечественнӑй вӑрҫӑра пулса, виҫӗ награда илнӗ. Комсомолӑн Вӑрнар районӗнчи организацийӗ йышӑннӑ тӑрӑх, суйлав комиссийӗн составне ВЛКСМ Вӑрнар райкомӗн секретарьне Ольга Давыдовна Давыдова юлташа кандидата тӑратнӑ.

Сӗнтӗрвӑрри Лесотехника техникумне

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ Сӗнтӗрвӑрринчи Вӑрман техникумӗн преподавателӗсемпе вӗренекенсен коллективне техникума уҫни 50 ҫул тултарнӑ ятпа саламлаҫҫӗ.

Сӗнтӗрвӑрринчи вӑрман техникумӗ уҫӑлни 50 ҫул тултарнине совет халӑхӗ фашистла Германипе империалистла [illegible] ҫӗнтернӗ пӗтӗм тӗнчипе историллӗ паллӑ кунсенче палӑртаҫҫӗ.

50 ҫул хушшинче техникум вӑрман квалификациллӗ вӑрман специалисчӗсене 1812 ҫынна вӗрентсе кӑларчӗ. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци хыҫҫӑн техникум раснах вӑйлӑ аталанса кайрӗ. Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче 1627 специалист вӗрентсе кӑларчӗ, вӗренмелли производство бази туса хучӗ, вӑл ӗнтӗ вӑрман специалисчӗсене малашне лайӑхрах вӗрентсе хатӗрлеме май парать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Вӑрман техникумӗн коллективӗ, мӗнпур совет халӑхӗпе пӗрле, фронта ытларах пулӑшу пама тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче 184 специалист вӗрентсе кӑларнӑ, техникум мастерскойӗсенче оборона заказӗсене тунӑ, техникум коллективӗ, заемсемпе лотерея билечӗсем туянса, ирӗклӗн укҫа-тенкӗ пухса парса, ҫӗршыва 296.122 тенкӗ укҫа пачӗ.

Вӗренекенсем ҫулран ҫул лайӑхрах вӗренсе пыраҫҫӗ, вӗсен дисциплини ҫирӗпленет политикӑллӑ активлӑхӗ ӳсет.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ Вӑрман техникумӗн коллективӗ пирӗн ҫӗршыва нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем кӳрсе хӑварнӑ суранӗсенчен хӑвӑртрах тӳрлетме кирлӗ вӑрман специалисчӗсене вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе малашне татах та лайӑхлатса пырас тесе тата хамӑрӑн социализмлӑ Тӑван ҫӗршыва малалла чечеклентерес тесе, хӑйсен мӗнпур вӑйне хурса ӗҫлессине шанса тӑраҫҫӗ.

Сывӑ пултӑр Сӗнтӗрвӑрринчи Вӑрман техникумӗ 50 ҫул тултарни!

Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ—пирӗн ҫӗнтерӳсене хавхалантаракан тата организациленӗ!

Сывӑ пултӑр совет халӑхӗн ҫулпуҫӗ аслӑ Сталин!

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ
Чӑваш АССР Совнаркомӗ
ВКП(б) Чӑваш Обкомӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

СӖНТӖРВӐРРИНЧИ ЛЕСОТЕХНИКА ТЕХНИКУМНЕ ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН ХИСЕПЛӖ ГРАМОТИПЕ НАГРАДӐЛАССИ ҪИНЧЕН.

Квалификациллӗ специалистсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫре ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Сӗнтӗрвӑрринчи Лесотехника техникумне, вӑл 50 ҫул тултарнӑ май, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1945 ҫулхи ноябрӗн 23-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

СӖНТӖРВӐРРИНЧИ ЛЕСОТЕХНИКА ТЕХНИКУМӖН ӖҪРЕ УЙРӐМАХ ПАЛӐРНӐ РАБОТНИКӖСЕНЕ ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН ХИСЕПЛӖ ГРАМОТИПЕ НАГРАДӐЛАССИ ҪИНЧЕН

Квалификациллӗ специалистсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн, Сӗнтӗрвӑрринчи Лесотехника техникумӗ 50 ҫул тултарнӑ май, унӑн ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ ҫак работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Георгий Антонович **Антонова**—техникум директорне.
2. Михаил Григорьевич **Григорьева** — хуралҫа.
3. Семен Филиппович **Ершова** — специальнӑй дисциплинӑсем вӗрентекене.
4. Сергей Кириллович **Кириллова**—специальнӑй дисциплинӑсем вӗрентекене.
5. Николай Александрович **Константинова**—столяр ӗҫне вӗрентекене.
6. Надежда Николаевна **Правдинӑна** — ют ҫӗршыв чӗлхисене вӗрентекене.
7. Петр Васильевич **Софьина** — специальнӑй дисциплинӑсем вӗрентекене.
8. Александр Константинович **Удорина**—специальнӑй дисциплинӑсем вӗрентекене.
9. Александра Матвеевна **Уткинӑна** — технически работника.
10. Анна Григорьевна **Ядровӑна**—библиотека заведующине.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.
Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1945 ҫулхи ноябрӗн 23-мӗшӗ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем НОЯБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	МТС-сем	Авăн çапнă
1. Вăрнар	201.2	16. Сурмайдан	57,2
2. Вăрмар	115.8	17. Сиява	57.0
3. Чкаловски	108.9	18. Куславкка	54,1
4. Комсомольски	104.3	19. Етĕрне	54.0
5. Калинино	94.0	20. Канаш	51.9
6. Шăхасан	90.1	21. Шупашкар	51.1
7. Улатăр	88.9	22. Çĕмĕрле	47.4
8. Йĕпреç	87.3	23. Первомайски	43.0
9. Пăрачкав	84.6	24. Ишлей	41.8
10. Красноармейски	84.2	25. Сĕнтĕр	37,0
11. Çĕрпӳ	80.6	26. Сĕнтĕрвăрри	35,0
12. Элĕк	79.7	27. Шăмăршă	22,9
13. Кувакино	76.8	28. Октябрьски	17,9
14. Тăвай	75.8	29. Хĕрлĕ Чутай	14,5
15. Елчĕк	75,0		

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

СĔНТĔР. Шомикри «Колос» колхоз (председателĕ К. Тяпп юлташ) çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне алла илчĕ. Çак хисеплĕ ялава ăна 1945 çулхи çурхи ялхуçалăх ĕçĕсен планне тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн панă.

Отечественнăй вăрçă пĕтнĕ хыççăн, аслă çĕнтерӳсемпе хавхаланса, кунти колхозниксемпе колхозницăсем кăçал ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçĕсене те начар мар туса ирттерчĕç. Колхоз тырпула планпа палăртнă пекех, кĕске вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртрĕ. Тырă вырма тухсан малтанхи кунсенчех авăн çапма тытăнса, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕ. Çакăн хыççăн планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 600 пăта ыхăн тырă тата çĕрулмипе пахчаçимĕçсем те чылай пачĕ.

Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене кăтартуллăн туса пынă вăхăтрах кунта çитес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсне те çирĕп хывса хăварнă. Кĕрхи çĕртме планне сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне ытлашшипех тултарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса колхозниксемпе колхозницăсем Октябрь уявне ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçленипе кĕтсе илме сăмах панă. Хăйсен сăмахне вĕсем чыслăн тӳрре кăларнă: ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне колхоз авăн çапса пĕтерсе, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те пысăк çитĕнӳ турĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Плана ирттерсе тултарнăшăн фермăра ĕçлекенсене чылайĕшне ĕçшĕн хушса тӳленĕ. Сурăх пăхакансем—А. Кузьмина—3 путек, Е. Скоблева—2 путек, В. Петров—1 путек, пăру пăхакан В. Егорова—пĕр пăру тата фермăсен заведующийĕ Е. Полякова пĕр пăру илнĕ.

Колхозăн государство умĕнче халĕ нимĕнле парăм та çук. Государствăпа аш-какай памалли плана çитес çулшăн та ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех 1946 çулшăн государствăна сĕт-çу, çăмарта тата ытти продуктсене те чылай панă.

Кунти колхозниксемпе колхозницăсем мирлĕ вăхăтра та вăрçă вăхăтĕнчи пекех тăрăшса ĕçлемеллине лайăх ăнланаççĕ. Акă, уйрăм тĕслĕхсем: В. Вернов колхозник кăçал хăй пĕччен 30 гектар ытла кĕрхи çĕртме сухи тунă, Хĕрлĕ Çартан таврăннă Е. Поляков кунне 50—60-шар лав таран кĕлтене капана хывнă, А. Журавлева колхозница кĕлте турттарнă çĕрте ĕç нормине кашни кунах 150—175-шер процент тултарса пынă, 60 çулхи старик Б. Макаров авăн çапнă çĕрте барабанщик пулса молотилкăна пĕр чармасăр ырми-канми ĕçленĕ пирки кунне 25 центнер вырăнне 40—50 центнер таран тырă çапнă.

Çамрăк ачасем те, ватă стариксем те колхоза хăйсен вăйĕ çитнĕ таран пулăшаççĕ. 78 çулхи старик Захар Вернов колхоза вĕрен-пăяв тата лаша кӳлмелли ытти хатĕрсем туса парать.

Çакăн пек ĕçлеççĕ «Колос» колхоз членĕсем мирлĕ вăхăт пуçланнă хыççăн. Вĕсен пурин те пĕр ĕмĕт, пĕр тĕллев пур. Вĕсем çĕршыва вăрçă кӳнĕ сурансене часрах юсаса çитерме, çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне татах та ӳстерме тăрăшаççĕ.

А. СОЛОВЬЕВ.

Ялхуçалăх çулне вĕçленĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен В. М. Молотов юлташ докладне Красноармейски районри «Комбайн» колхоз членĕсем тĕплĕн сӳтсе яврĕç. Ку ĕçре агитколлектив тата учительница Таисия Терентьева аван ĕçлерĕç.

Колхозниксем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва хутшăнса, государствăна тырпул, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурнăçларĕç.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче авăн çапса пĕтернĕ. Выльăх-чĕрлĕх фермисене çуллахи ăшă кунсенчех кирлĕ пек юсанă.

Кăçал ĕçкунĕсем тăрăх 2,5 килограмм тĕштырă, 3 килограмм çĕрулми, 25 грамм пыл валеçме палăртнă. Колхоз счетоводĕ Игнатьев юлташ колхозниксем ĕçленĕ ĕçкунĕсене яланах вăхăтра çырса пырать тата колхозниксене каласа парать. Колхозниксем халĕ çитес çуракине хатĕрленеççĕ, ялхуçалăх машинĕсене юсаççĕ та та вăрлăх тасатаççĕ.

Я. ЯКОВЛЕВ.

УТ ТАВРАШĔСЕМ ТИРПЕЙЛЕ

Елчĕк районĕнчи «Новый путь» колхозăн урапа-çунасене лартмалли сарайсем пулман пирки вĕсем тĕрлĕ çĕрте юр тата çумăр айĕнче ларса çĕрсе пĕтетчĕç.

Колхоз кăçал 150 кубометр вăрман касса турттарчĕ, çак материалтан 60 урапа лартмалăх виçĕ сарай туса лартнă.

Халĕ колхозăн урапи-çунисем, ут таврашсем яланах паллă вырăнта тирпейлĕ тăраççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ.

Сеид хаçачĕсем хаярран тыткалассипе хăратаççĕ

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Элеклекен хаçатсем (вĕсене ют çĕршыв çыннисемпе çыхăнса тăракан Сеид-Зия-Эд-Дина укçа парса пулăшса тăрать) Çурçĕр Иранри темле «восстани» çинчен тĕрлĕ майпа элеклĕ хыпарсем сараççĕ. Ĕнер, çапла, Çурçĕр Иранра «пăлхавçăсен отрячĕсем» темиçе хула йышăнни çинчен, çав шутра Зенджан хулине йышăнни çинчен хыпар сарнăччĕ. Анчах паян «Эттелаат» хаçат тата Тегеранра тухакан ытти хаçатсем çав хыпарсене сирсе янă, Зенджанран, Астарирен тата Ардебильтен килнĕ хыпарсем тăрăх, çав хуласенче пурнăç йĕркеллĕ пырать, тенĕ.

Апла пулин те, столицăри темле çынсем: Çурçĕр Иранри азербайджанецсем Иранран уйăрălma тăрăшаççĕ, тесе суя хыпарсем сарса çӳреççĕ. Пĕр паллă демократиллĕ деятель каланă тăрăх, Иран Азербайджанĕнче «пăлхав» пирки шавлани вăл Çурçĕр Иранра вырăнти самоуправлени органĕсене суйланине хурлама тунă япала пулса тăрать; çапла туса, Çурçĕр Иранри демократиллĕ организацисене тата вĕсене кăмăллакан халăха хĕсĕрленипе тӳрре кăларма тăрăшаççĕ. «Эттелаат» хаçат каланă тăрăх, Тавриз хулинче «йĕркене пăсма» хăтланакансене хирĕç хаяр мерăсем йышăнасси çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Демократиллĕ организацисем митинг тума тăрăшнă пирки çапла хăратма пуçланă ĕнтĕ, митинг тунине вырăнти жандармсем «йĕркене пăсни» пулать тесе шутлаççĕ.

Иранăн çурçĕр енчи провинцийĕсенчи халăха ют çĕршывсен хăшпĕр хаçачĕсем тата Лондонри радио Çурçĕр Иранри лару-тăру çинчен суя сăмахсем сарни питĕ тарăхтарать. Тегеранра тухакан пĕр прогрессивлă хаçатăн редакторĕ çапла каланă: Тегеранра Сеид хаçачĕсен редакторĕсем «Тавриза пăлхавçăсем тытса илни çинчен», «пăлхавçăсем Тегерана тытса илме кайни çинчен» суя сăмахсем сарнă пекех, Рейтер агентстви те çавăн пек сăмахсемех сарни мана тĕлĕнтерет. Рейтер агентствин Тегеранри корреспонденчĕ хăйĕн статьисенче час-часах çав сутăнчăк хаçатсенчи статьясем çине кăтартса çырать.

ГРЕЦИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО

АФИНЫ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Монархистсен «халăх партийĕ» текен парти коалициллĕ правительствăра ĕçлеме килĕшмен хыççăн Грецири çĕнĕ правительствăна тума либералсен партийĕн пуçлăхне Софулиса хушнăччĕ. Софулис тунă çĕнĕ правительствăна Софулисăр пуçне çаксем кĕнĕ: прогрессистсен пуçлăхĕ Кафандарис (вăл премьер-министрăн иккĕмĕш заместителĕ тата восстановлени министрĕ пулса ĕçлет, унăн финанс, снабжени тата наци экономикин министерствисен ĕçĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе тумалла), аграрнăй партин пуçлăхĕ Милонос (финанс министрĕ) тата Софианопулос (ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ).

Монархистсен хаçачĕсем çĕнĕ правительствăна çав тери хытă критикăлаççĕ. Монархистсем Бевин янă телеграммăна пичетлесе кăларма ыйтнă. «Эллиникон эма» ятлă хаçат Греци çарне тата монархишĕн тăрăшакансене пурне те демократсене хирĕç çапăçма «хатĕр тăма» чĕнпĕ. Регент çĕнĕ правительствăна çар министрĕ пулса ĕçлеме Папандреуна кĕртме ыйтни тата унăн «партийĕн» представителĕ валли тинĕс министрĕ вырăнне хăварма ыйтни çĕнĕ правительство тăвас ĕçе кансĕрлесе лартнă. Анчах та либералсем, Папандреуна общественность юратманнине шута илсе, регент çапла ыйтнине хирĕç тăнă.

АФИНЫ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Софулис икĕ паха министерствăна Папандреу аллине пама килĕшмен пирки, Дамаскинос архиепископ регент вырăнĕнчен тухнă. Регент ĕçĕсене вăхăтлăха туса тăма Канелопулос йышăннă. Вăл вара çĕнĕ правительство присягине йышăннă.

Финляндире вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене суд тăвасси çинчен

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Айăпланакан 4 çынна (Таннера, Рейникка, Кивимякие тата Кукконене) суд вĕсен ĕçне пăхма пуçличчен ирĕке кăларассине общественноçăн пысăк пайĕ кĕтмен. Таннера ирĕке кăларма йышăнассине вара пушшех те кĕтмен. Судра Таннерăн шовинистла-агрессиллĕ сăмахĕн хăшпĕр пайĕсене вуласа панă. Вĕсене вуласа пани судра ларакан журналистсемпе ытти çынсене Таннера судчен ирĕке кăларма юраманнине кăтартса панă.

Государство совечĕ вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене пурне те тытса хупма кирли çинчен каланăччĕ. Анчах та суд членĕсенчен нумайăшĕ государство совечĕн çав сăмахне хирĕç тухса каланă. Суд кĕтмен çĕртен çавăн пек тунине хирĕç прогрессивлă хаçатсемпе демократиллĕ организацисем протестленĕ. Предприятисенче çавна хирĕç протестлеме пухнă йышлă çынлă пухусем пулса иртнĕ.

«Финляндире вăрçă пуçласа янăшăн айăплă çынсене суд туни—йăлишĕн çеç тунă япала е çурма мера пулмалла мар», —тесе çырать «Фольктиднинген» хаçат.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче «Финляндипе СССР» ятлă общество президиумĕн членĕсем Вуолиоки, Рюэмя, Кивикоски тата Рикка юстици канцлерĕ Тарьянне патне пынă та унăн тĕп айăплакан шучĕпе тунă ĕçĕсене ырланă. Тарьянне хăйĕн сăмахĕнче вара çапла каланă: суд çавăн пек йышăнассине эпĕ пĕртте кĕтмен, тенĕ.

Çакăн хыççăн «Финляндипе СССР» ятлă, общество президиумĕн çав членĕсем, юстици министрĕ Кекконен патне пырса, ăна çакăн пек заявлени панă:

«Финляндипе СССР» ятлă обществăн президиумĕ çав общество членĕсен ячĕпе Сире, господин юстици министрĕ, тата государство совечĕн членĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: Финляндипе Совет Союзне пĕр-пĕринпе туслăн пурăнтарма тăрăшакан пирĕн халăх вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене суд тăвас ĕçĕн юлашки тапхăрĕ пирки пăшăрханать. Общество президиумĕ государство совечĕн членĕсене шанать: çав членсем, пирĕн обществăн членĕсем пулса тăрса, халăха пычĕç. Вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсен нумайăшĕн айăпĕсене юстици канцлерĕ кирлĕ решенисем йышăнма май тупса Тарьянне господин тĕплĕн кăтартса панине пăхмасăрах, вĕсене суд ирĕке кăларма йышăнни Совет Союзĕпе Финляндин хушшинчи туслă çыхăнусене пăсать, çав çыхăнусене перемири договорне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пырсан çеç лайăх тытса пыма пулать. Çавăнпа та эпир вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсем тĕлĕшпе суд çавăн пек хурлантармалла йышăннине правительство тӳрлетессине кĕтсе тăратпăр». Çак заявление «Финляндипе СССР» ятлă общество президиумĕн членĕсем Хэлла, Вуолиоки, Маури Рюэмя, Сакс Серголиус, Пааво Кивикоски тата Аймо Рикка алă пуснă.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 22-мĕшĕнче судăн ирхи ларăвне уçнă чухне пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн председателĕ Лоуренс судья çапла пĕлтернĕ: айăпланакан Штрейхер хăй сывмарри çинчен пĕлтерчĕ, тенĕ. Председатель каланă тăрăх, Штрейхер сывлăхне виçĕ медицина эксперчĕ пăхса тухнă. Вара вĕсем Штрейхера сывмар тенĕ, анчах вăл суд ларăвĕсенче пулма пултарать, тенĕ. Çавна пула Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕ Штрейхер ĕçне пăхнă чухне унăн суд ларăвĕсенче пулмалла тесе йышăннă.

Малалла Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн председателĕ çапла пĕлтернĕ: айăпланакан Мартин Борман суда çӳреме пултарайман пирки ăна хӳтĕлекен унăн ĕçне уйăрса хурса тепĕр чухне пăхма ыйтрĕ. Председатель çапла пĕлтернĕ: Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕ зашитник ыйтнине сирсе ячĕ. Борман ĕçне хăйсĕрех пăхатпăр, тенĕ.

Кун хыççăн трибунал председателĕ Лоуренс айăпланакансен представительне Америка полковникне Роберт Сторие сăмах панă. Роберт Стори трибунала Америка çарĕсен представителĕсем айăпланакансем çинчен калакан документсене мĕнле майпа пухни çинчен каласа панă. Сăмахран, Роберт Стори çакăн çинчен каласа кăтартнă: чи паха документсене нумайĕшне çĕр айĕнче, стенасен ăшĕнче, подвалсенче тата убежищесенче тупнă. Çапла, айăпланакан Розенбергăн дневникĕсене тата унăн çырăвĕсене Баварири пĕр çуртра суя стена хыçĕнче тупнă. Нимĕçсен авиаци министерствин документчĕсене Баварири Альп тăвĕсем çинче тупнă. Роберт Стори малалла çапла каланă: чи кирлĕ паха документсене тупиччен малтан темиçе çĕр тонна тĕрлĕ хутсем, кĕнекесем, çырусем, фото-документсем пăхса тухса сортлама тиврĕ, тенĕ. Хăйĕн сăмахне пĕтерес умĕн Роберт Стори полковник тĕрлĕ документсене суда мĕнле йĕркепе парса тăрса, вĕсене суд ларăвĕсенче мĕнле йĕркепе пăхмаллине кăтартса панă. Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕ Роберт Стори сĕннĕ йĕркепе килĕшнĕ. Айăпланакансене хӳтĕлекенсем те Роберт Стори сĕннĕ йĕркене хирĕç нимĕн те каламан.

Ун хыççăн айăпланакансен тепĕр представителĕ американец Альбрехт Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналне айăплакан пĕрремĕш документа панă, вăл документ — Гитлер партийĕн уставĕпе структури тата Германи правительствин структури. Пĕтĕм тĕнчери трибунал умĕнчи стена çине Гитлер партийĕн структурине кăтартакан схемăна çакса хунă. Трибуналăн кашни членнех çав схемăн пĕчĕк ӳкерчĕкне панă. Çав схемăна тĕплĕн ăнлантарса парсан, айăплакансен представителĕ айăпланакансенчен нумайăшĕ ертсе пырас ĕçре ĕçленине ăнлантарса парать, уйрăмăнах Герингăн, Розенбергăн, Борманăн, Фрикăн, Гессăн ĕçĕсене тĕплĕн сутатса парать тата Гитлер партийĕн аслă аппаратĕнче ĕçленĕ ытти айăпланакансен ĕçĕсене те тĕплĕн кăтартса парать.

Судăн ирхи ларăвĕ çакăн хыççăн хупăннă.

НОЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян трибуналăн каçхи ларăвĕнче Америка енчен айăплаканăн сăмахне итленĕ. Майор Уоллер Гитлер партийĕ пуçланса кайнă чухне унăн тĕллевĕсемпе задачисем мĕнле пулнине кăтартса панă, унтан гитлеровецсен преступникла ĕçĕсене хаклама тытăннă.

Йышлă документсемпе усă курса, вăл Гитлер партийĕн руководителĕсем, уйрăм илсе каласан—айăпланакансем Геринг, Фрик, Розенберг тата Функ, хăйсен тĕллевĕсене пурнăçламашкăн вăйпа ирĕксĕрленине, провокацисем тунине кăтартса панă, вĕсен каварлашăвĕн тĕллевĕсене палăртса панă; вĕсен тĕллевĕ—чи малтан Германири влаçа хăйсен аллине тытса илесси, унтан вара—«пурăнма кирлĕ çĕрсем» тытса илесси пулнă. Çак айăпланакан преступниксем ертсе пынă гитлеровецсем хăйсен пĕррĕмĕш тĕллевне çак майсемпе усă курса пурнăçланă: мĕнпур демократиллĕ организацисене аркатса тăкса, хăйсене хирĕç пыракан çынсене йышлăн тыта-тыта хупса тата вĕлерсе пĕтерсе. суя пропагандăна анлăн сарса пынă. Влаçа хăйсен аллине тытса илсе, айăпланакансем, Гитлер ертсе пынипе, Германи государствинчен хăйсен ĕçне тумалли хатĕр туса хунă.

Çакăн хыççăн, Америка енчен айăплакан каланă тăрăх, гитлеровецсем часах вăрçа хатĕрленме пуçланă, вĕсем пĕтĕм тĕнчене хирĕç вăрçă пуçласа яма хатĕрленнĕ. Фашистсен пуçлăхĕсем, уйрăмах та айăпланакан Розенбергпа Штрейхер, «пуçпулса тăракан раса» тенĕ вĕрентӳ сырса хатĕрленĕ. Çав вĕрентӳ малтан Европăна, унтан пĕтĕм тĕнчене чуралаптармалли плансене тӳрре кăларма тăрăшнă.

Америка енчен айăплакан хăйĕн сăмахĕн иккĕмĕш пайĕнче гитлеровецсем Германире хăйсен агрессиллĕ политикине пурнăça кĕртме кансĕрлеме пултаракан мĕнпур вăйсене хирĕç кĕрешни çинчен нумай каланă. Гитлеровецсем коммунистсене пуринчен те хаяртарах хĕсĕрленĕ. Коммунистсен партине вĕсем чарса лартнă, унăн пурлăхне тытса илнĕ, унăн активисчĕсене е вĕлернĕ, е концентрациллĕ лагерьсене хупнă. Вĕсем социал-демократсене те хĕсĕрленĕ. Гитлеровецсем чиркĕве те хĕсĕрленĕ. Гитлеровецсен пуçлăхĕсем еврей халăхне уйрăмах хаяррăн тыткаланă. Тĕрлĕ законсем кăларса, вĕсем еврейсене обществăпа хуçалăх пурнăçĕнчен йăлтах пăрса янă, унтан вара вĕсене вĕлерсе пĕтерме тытăннă.

Америка енчен айăплакан юлашкинчен Гитлерăн çак сăмахĕсене илсе кăтартнă: çак вăрçăра Европăри еврей халăхне вĕлерсе пĕтерĕпĕр, тенĕ Гитлер.

Трибунал енне пăхса, айăплакан çапла кăшкăрса калать: «Çапла тăвасси çинчен калани мĕнле пурнăçа кĕнине эсир хăвăр пĕлетĕр», тет.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ДАХАУ ХУЛИНЧИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРĔНЧИ ПРЕСТУПНИКСЕНЕ СУД ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: ноябрĕн 20-мĕшĕнче суд ларăвĕнче фашистсен Дахау хулинчи концентрациллĕ лагерĕнче ĕçленĕ 40 преступникне айăпланă чухне чылай документсем вуласа панă, çав документсене лагерь управленийĕнче тупнă. Çав документсем кăтартнă тăрăх, Дахау лагерĕнче 100 пин çынна вĕлернĕ.

ЭТТЛИ АНГЛИЕ ТАВРĂННĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи премьер-министрĕ Эттли ноябрĕн 20-мĕшĕнче Англие таврăннă.

Комсомолецсемпе çамрăксем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçре

Сталинла Конституци совет çамрăкĕсене ĕçлев прави, вĕренӳ прави, канăç прави пачĕ. Сталинла Конституци пирĕн çамрăксене политикăллă мĕнпур правасене пачĕ. Пирĕн çĕршыври çамрăксем хăйсен организацийĕсем—ленинла комсомол, профсоюз тата тĕрлĕ обществăллă организацисем урлă—депутата суйлама кандидатсем тăратма пултараççĕ. Пирĕн çĕршыври çамрăксен вĕсем арçынне-хĕрарăмне, хăш наци е расса çынни пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, мĕнле класран тухнине, пурлăхĕ мĕнлине, ĕлĕк мĕн ĕç туса пурăннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине пăхмасăр пурин те ял Советĕнчен пуçласа СССР Верховный Советне çитиех суйлама та, суйланма та пĕртан права пур. Çакăн пек политикăллă анлă правасем урăх нихăш çĕршывра та çук.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем пирĕн çамрăксенчен çав правасене туртса илесшĕн пулчĕç. Совет çамрăкĕсем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ирсĕр тăшмана çапса аркатса, хăйсен прависене хӳтĕлесе хăварчĕç. Вăрçăн чи йывăр çулĕсенче пирĕн çĕршыври çамрăксем большевиксен партийĕ, аслă Сталин тавра тата [illegible] пĕтĕçрĕç. Çакна çамрăк суйлавçăсем çитес суйлавра тата тепĕр хутчен кăтартса парĕç.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май пирĕн республикăри комсомолецсемпе çамрăксен политикăллă тата ĕçри хастарлăхĕ нумай ӳсрĕ.

Чурачăк районĕнчи „Родина" колхозри комсомолецсем (комсомол организацийĕн секретарĕ Вальков юлташ) СССР Верховный Советне суйласси çинчен Указ тухсанах, суйлава лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме сăмах панă. Вĕсем кĕске вăхăтрах авăн çапса пĕтерме, çĕрулми тата ытти пахчаçимĕçсене вăхăтра пухса кĕртме, государство умĕнчи парăмсене ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илсе, комсомолецсемпе çамрăксенчен авăн çапакан тата транспорт бригадисем организациленĕ. Вĕсем вара кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлесе хăйсен обязательствине октябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне пурнăçланă.

Суйлава хатĕрленнĕ май Канашри вагонсем юсакан заводри комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен ĕç тухăçлăхĕ нумай ӳсрĕ. Акă, Горшенин юлташ ертсе пыракан бригада кулленхи ĕç нормине 250—300 процент таран тултарса пырать. Комсомолец Горшенин юлташ уйăхри ĕç нормине 400 процент таран тултарать Çакăн пек хастар ĕçлекен комсомолецсемпе бригадăсем республикăра сахал мар.

Халĕ комсомол организацийĕсем умĕнче суйлав законне, Сталинла Конституцие кашни çамрăк суйлавçăна тĕплĕн ăнлантарса парас задача тăрать. Çак пысăк задачăна ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре комсомол организацийĕсен иртнĕ суйлавра тата Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче туса пынă массăллă агитаци ĕçĕн опычĕсемпе усă курмалла. Суйлав Положенипе Сталинла Конституцие ăнлантарса парас тĕлĕшпе республикăра комсомолецсенчен 5.174 агитатор-вулавçă ĕçлет, çак чаплă документсене вĕренме 844 кружок организациленĕ. Ялти суйлавçăсене пулăшас майпа комсомол райкомĕсем çумĕнче агиткультбригадăсем организациленĕ. Вăл бригадăсенче пĕр-икĕ докладчик тата художествăллă пултарулăх коллективĕсем тăраççĕ.

Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсем çумĕнче штатра тăман докладчиксен ĕçĕсем нумай лайăхланчĕç. Акă, комсомолăн Чкаловски райкомĕн штатра тăман докладчикĕсем çамрăк суйлавçăсене лекцисемпе докладсем туса панă.

Комсомолăн Хĕрлĕ Чутай райкомĕ çамрăк суйлавçăсен вечерĕсене ирттерет. Иртнĕ вечерта СССР Верховный Совет суйлавĕ çинчен доклад туса панă. доклад хыççăн культура çуртĕ çумĕнчи драмкружок спектакль лартнă, хор кружокĕ вырăс тата чăваш халăх юррисене юрланă.

Суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе Шупашкар, Улатăр, Канаш, Çĕрпӳ, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Муркаш тата ытти районсенчи комсомол организацийĕсем те начар мар ĕçлеççĕ.

Ку тĕлĕшпе уйрăмах Улатăр хулинчи комсомол организацийĕсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Акă, „Красная швея" артельте суйлав Положенине вĕренмелли кружоксене чи лайăх стахановкăсем—Люба Архипова, Рассейкина тата Шокова комсомолкăсем ертсе пыраççĕ. Паровозсем юсакан заводри комсомол организацийĕ цехсемпе общежитисенче агитаци ĕçне туса пыма 10 комсомолец-агитатор уйăрнă. Агитаторсем хăйсен ĕçне питĕ юратса, пысăк хаваслăхпа тăваççĕ. Хулари комсомолец-агитаторсене уйрăм урамсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем суйлавçăсем патĕнче час-часах пулса калаçусем ирттереççĕ. Камасова комсомолка килхуçи хĕрарăмĕсемпе суйлав Положенийĕ çинчен час-часах калаçусем ирттерет. Çавăн пекех „Красный Восход", „Гигиена" артельсем, 7-мĕш номерлĕ вăтам шкул, апат-çимĕç комбиначĕ, махорка фабрикĕ, типографи çумĕнчи кружоксем аван ĕçлеççĕ.

Комсомолăн Вăрмар райкомĕ ВКП(б) райкомĕпе пĕрле агитаторсен канашлăвне ирттернĕ. Çавăн хыççăн суйлав Положенине ăнлантарма колхозсене 220 агитатор туха кайнă. „Дружба" колхозри çамрăксен вечерĕнче „СССР Верховный Советне суйламалли Положени" çинчен ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Павлова юлташ доклад туса панă. „Маяк" колхозри комсомол организацийĕ кашни вунă киле пĕр агитатор-комсомолец çирĕплетнĕ. Халĕ вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă килсенчи суйлавçăсене эрнере виçĕ хутчен пĕр çĕре пухса суйлав законĕпе Сталинла Конституцие ăнлантараççĕ. „Свобода" колхозри комсомолецсемпе çамрăксем суйлав Положенине кружокра вĕренеççĕ. Çавăн пек кружоксем районри ытти колхозсенче те организациленĕ.

Комсомолăн Шупашкар хула комитечĕ хула Советне суйлавçăсен списокĕсене тунă çĕрте пулăшма 60 комсомолец уйăрса панă.

Суйлав Положенине вĕренессине Муркаш районĕнчи „Самолет" колхозри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче те лайăх йĕркеленĕ. Кунта Суворов агитатор кружок занятийĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттерет, суйлавçăсене хаçатсенче пичетленсе тухнă статьясене вуласа парать. Кунта комсомолецсем пуçарнипе суйлав çинчен ятарласа выставка организациленĕ.

Анчах çак ĕçсем комсомол организацийĕсен суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен пуçламăшĕ кăна-ха. Халĕ комсомол организацийĕсем умĕнче çамрăк суйлавçăсене суйлава лайăх хатĕрленме пулăшас, суйлав законне тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кашни комсомолец-агитаторăн ырми-канми ĕçлемелле. Массăллă агитаци ĕçне культпросвет учрежденийĕсемпе çыхантарса туса пымалла. Çав майпа кашни вулав çуртне, клуба, библиотекăна лайăх ĕçлекен тумалла. Вулав çурчĕсемпе клубсенче ĕçлеме чи хастарлă комсомолецсене уйăрмалла. Суйлава хатĕрленсе стена хаçачĕсене йĕркелĕ кăларса тăмалла, художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçĕсене лайăхлатса суйлавçăсен вечерĕсене ирттерме пулăшмалла. Суйлав пулмалли çуртсене йĕркелесе илемлетесси, суйлавçăсен списокĕсене тума пулăшасси — пысăк та кирлĕ ĕçсем пулса тăраççĕ. Çак ĕçсенче комсомолецсемпе çамрăксен яланах малта пулмалла.

Комсомолецсемпе çамрăксем участоксенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратас ĕçе хастарлăн хутшăнаççĕ. Кунта вĕсен государство ĕçĕнче тата обществăллă организацисенче хастар ĕçлекен политика енчен тĕрĕсленĕ комсомолецсене кандидата тăратма сĕнмелле.

Комсомол организацийĕсен массăллă агитаци ĕçне комсомолецсемпе çамрăксен ĕçри хастарлăхне ӳстерес майпа туса пымалла.

Çитес суйлавсем комсомол организацийĕсене, уйрăм комсомолецсемпе пĕтĕм совет çамрăкĕсене политикăлла воспитани парас тĕлĕшпе пысăк шкул пулса тăраççĕ. Верховный Совет суйлавне хатĕрленсе, комсомол организацисен çамрăксемпе тата çирĕпрех çыхăнса, умра тăракан пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн татах та хастарлăрах ĕçлеме тытăнмалла.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обком секретарĕ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство директорин — 0-23.

НТ 00462 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при Чăваш АССР. Заказ № 2. ф. 6. 59x42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.